Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТĂВАН ЕН

30 (8867) № ❋ 2004 ҫулхи мартӑн (пуш уйӑхӗн) 17-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

## МАРТĂН 14-МĔШĔНЧЕ РАЙОНТИ СУЙЛАВҪĂСЕМ НИХҪАНХИНЧЕН АКТИВЛĂ ПУЛСА ПЫСĂК ХАСТАРЛĂХ, ҪĔРШЫВ ШĂПИШĔН ХЫПСА ҪУННИНЕ КĂТАРТРĔҪ

## КОМИССИСЕМ ПĔР ТИКĔС ĔҪЛЕРĔҪ

- Паян, мартӑн 14-мӗшӗнче, ирхи сакӑр сехет тӗлне панӑ сведенисем тӑрӑх Шупашкар районӗнче суйлавҫӑсен списокӗсенче пурӗ 39990 ҫын,- терӗ территори суйлав комиссийӗн председателӗ М.А.Семенов. - Паллах, ку цифра улшӑнма пултарать. Пирвайхи хут сасӑлакансен йышӗ - 450 ҫын. Пирӗн пата районти 56 суйлав участокӗнчен сведенисем кашни икӗ сехетрен килсе тӑраҫҫӗ, пуринпе те шанчӑклӑ ҫыхӑну. Вырӑнти комиссисем пӗр тикӗс ӗҫлессе шанатӑп.

Суйлава миҫе ҫын хутшӑннине территори комиссийӗнче вӑраха ямасӑр пӗтӗмлетеҫҫӗ, «ГАС-выборы» элетронлӑ системӑпа усӑ курса тӳрех Шупашкара тата Мускава пӗлтереҫҫӗ. Ку енӗпе система администраторӗ Р.Г.Игнатьев тӑрӑшать.

Район центрӗнче суйлав участокӗсем тӑваттӑ. Акӑ, ытти ҫӗрти пекех 745-мӗш Совет участокӗнче сасӑлав шӑп та лӑп 8 сехетре пуҫланчӗ. Ку вӑхӑт тӗлне суйлавҫӑсем чылай пухӑннӑ ӗнтӗ. Ҫичӗ ҫынран тӑракан комисси ӗҫне Н.Н.Беляков йӗркелесе пырать. Пӗрремӗш хут мар суйлав ирттернӗ ҫӗре хутшӑннӑ вӑл, А.В.Евдокимова, Р.Н.Ясонова, Д.Л.Григорьев комисси членӗсен те ӗҫ опычӗ пысӑк.

- Пирӗн суйлав списокӗнче пӗтӗмпе 1775 ҫын шутланать,- каласа пачӗ Николай Николаевич. - 28 суйлавҫӑ урӑх ҫӗрте суйлама ирӗк паракан документ илнӗ.

Суйлав пуҫланни 10-15 минут кӑна иртрӗ, вӑтӑра яхӑн суйлавҫӑ бюллетень илсе сасларӗ те. Чи пирвайхи А.М.Ростовцев водитель пулчӗ.

- Тӑхтаса тӑмасӑр рейса тухмалла манӑн,- тет вӑл. - Ҫапах та хулана тухса кайиччен хамӑн гражданин тивӗҫне пурнӑҫласах терӗм.

Участокра хӑтлӑ, таса. Милици капитанӗ В.И.Петров та кунтах.

27-мӗш номерлӗ професси училищин ҫуртӗнче Первомайски суйлав участокӗ вырнаҫнӑ. Калас пулать, 4-5 ҫул каярах ку участока тӗпрен илсен Кӳкеҫри ваттисем-



пе инвалидсен интернат ҫуртӗнчи ҫынсем ҫӳренӗ. Халӗ ӑна анлӑлатнӑ, суйлав списокне 1965 ҫын кӗртнӗ, Патирекри, К.Маркс урамӗнчи 108, 110 ҫуртсенче пурӑнакансене тата ытти сене те ҫак участока ҫирӗплетнӗ.

Комисси председателӗ, училище преподавателӗ Л.А.Ефимова каласа панӑ тӑрӑх, вӑл комисси йышӗнче 1982 ҫултанпах тӗрлӗ суйлав ирттерме хутшӑнать. З.А.Тимофеевӑпа Т.П.Матвеева та суйлав енӗпе ҫӗнӗ ҫынсем мар, тимлӗ, вӑр-вар ӗҫлеҫҫӗ, сасӑлава пынисемпе кӑмӑллӑ калаҫаҫҫӗ.

Кунта сасӑламалли тӑватӑ кабина вырнаҫтарнӑ, комиссие йӗркеллӗ ӗҫлеме пур услови те ҫителӗклӗ, ӑшӑ, ҫутӑ, телефон ҫыхӑнӑвӗ пур, буфет ӗҫлет, ачасен ӳкерчӗкӗсен выставкипе паллашма пулать.

743-мӗш Тӗп суйлав участокӗнче те пултӑмӑр.

Акӑ, суйламалли кабинӑран ҫамрӑк хӗр тухрӗ, алӑри бюллетене ещӗке ячӗ. Кӑмӑлӗ лайӑх пулас, сӑн-питӗнче кулӑ ҫиҫет. Паллашрӑмӑр. Екатерина Красавцева Шупашкарти педагогика университечӗн студентка.

- Паян хам пурнӑҫра чи пирвайхи хут суйлава хутшӑнатӑп,- тет вӑл - Паллах, маншӑн ҫакӑ питӗ хумханулла самант пулчӗ. Ҫитес суйлавсене те хутшӑнма, гражданла тивӗҫе пурнӑҫлама шутлатӑп.

Комисси председателӗ Т.П.Остапчук каласа панӑ тӑрӑх, вырӑна тухса суйлама ыйтса больницӑран 30 ытла заявлени килнӗ. Комисси членӗсен вӗсем патне ҫитме хатӗрленеҫҫӗ.

Суйлава ҫемйипех е алла-аллӑн тытӑнса килекен мӑшӑрсене те асӑрхама май пулчӗ. Тӗслӗхрен, Августина Ивановнапа Николай Петрович Петровсем тулли кӑмӑлпа сасӑлани ҫинчен пӗлтерчӗҫ.

- Темшӗн ӗлӗк суйлавсем активлӑрах, савӑнӑҫлӑрах, чӑн-чӑн уяв евӗр иртнӗн туйӑнать,- теҫҫӗ вӗсем. - Ун чух купӑс каласа, юрласа килетчӗҫ суйлава. Пурнӑҫӗ улшӑннӑ май, йӑли-йӗрки те урӑхланать пулас. Анчах та ҫирӗплетсех калатпӑр: эпир пӗр суйлавран та пӑрӑнса тӑман, сывлӑх пур чухне ялан участока ҫитнӗ, вӑл е ку кандидатшӑн сасӑланӑ.

❋ ❋ ❋

Ӗнер, суйлав хыҫҫӑн икӗ кун иртсен, М.А.Семеновпа, территори комиссийӗн ертӳҫипе, теппе тӗл пултӑмӑр.

- Районти мӗнпур 56 участокра суйлав ӑнӑҫлӑ иртрӗ,- терӗ вӑл кӑмӑллӑн. - Вырӑнти комиссисем пирӗн шанӑҫа чӑннипех тӳрре кӑларма пултарчӗҫ, тавах вӗсене уншӑн. Суйлавра сасӑланин результачӗсем начар мар, вӗсемпе тӗплӗн паллашма пултаратӑр.

**Г.ЕГОРОВ.**

❋ **Тӗп суйлав участокӗнче.**

## СУЙЛАВ КĂТАРТĂВĔСЕМ

**Раҫҫей Президентне 2004 ҫулхи мартӑн 14-мӗшӗнче суйланин итогӗсене пӗтӗмлетсе, районти территори суйлав комиссийӗ ҫапла пӗлтерет:**

**Территорире пурӗ 56 участокри суйлав комиссийӗ ӗҫленӗ.**

**Сасӑлав чӑн мар тесе йышӑннӑ суйлав участокӗсем ҫук.**

**Суйлавҫӑсен списокӗсене 41433 ҫынна кӗртнӗ. Вӗсенчен сасӑлава 27638 ҫын е 66,71 проценчӗ хутшӑннӑ.**

**Президент пулма тӑратнӑ кандидатсемшӗн ҫапла сасӑланӑ:**

| | | |
|---|---|---|
| **Глазьев Сергей Юрьевич** | **609** | **2,20%** |
| **Малышкин Олег Александрович** | **512** | **1,85%** |
| **Миронов Сергей Михайлович** | **200** | **0,72%** |
| **Путин Владимир Владимирович** | **18573** | **67,20%** |
| **Хакамада Ирина Муцуовна** | **591** | **2,14%** |
| **Харитонов Николай Михайлович** | **6182** | **22,37%** |
| **Пур кандидатсене те хирӗҫ** | **427** | **1,54%** |

❋ ❋ ❋

Суйавҫӑсен активлӑхне кӑтартакан сведенисене тишкерсен, ҫакӑн пек пӗтӗмлетӳ тума пулать: сасӑлава хутшӑннисен шучӗ пӗчӗкрех ялсенче нумайрах, поселоксенче, ытти пысӑк е хула ҫывӑхӗнчи ялсенче - сахалтарах.

Сӑмахран, Ҫӗньял Покровски, Кивпулӑх, Кипечкасси, Хӑймалакасси, Янӑш, Явӑш, Мӑн Чӑкӑр суйлав участокӗсенче списока кӗртнисен 83,80 - 78,26 проценчӗ сасӑлама хутшӑннӑ. Ҫав хушӑрах Кӳкеҫри Тӗп, Шкул участокӗсенче, Карачура, Олкаш, Вӑрманкасси суйлав участокӗсенче ҫак кӑтарту 57,56 - 59,70 процентпа танлашнӑ.

## ПЕНСИ АПРЕЛЬТЕ ӲСЕТ

РФ Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министрӗ М.Зурабов В.Путин Президента апрель уйӑхӗнче пенси виҫине ӳстермелли плансемпе паллаштарнӑ. Пенси вӑтамран 121 тенкӗлӗх пысӑкланӗ, ҫакӑ пур пенсионерсене те пырса тиветмӗн. Вӑтӑлнипе пенсие тухнисен пенси хисепӗ вӑтамран 135 тенкӗ ӳсет.

Зурабов калань тӑрӑх, «ҫакна валли Пенси фончӗн бюджетӗнче укҫа-тенкӗ ҫителӗклӗ». Ҫавӑнтах вӑл пенсие кӑҫал апрельте кӑна мар татах та ӳстерессине палӑртнӑ. Вӑл ҫапла ӑнлантарнӑ: ку правительствӑн 2003 ҫулхи ӗҫ итогӗсем тӑрӑх пурнӑҫланакан хушма индексаци. «Эпир пӗлтӗрхи парӑмсене тавӑрса пани евӗрлӗ пулса тухать»,- тенӗ.

Владимир Путин Патшалӑх Думине ачаран инвалида тухнисен, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче суранланнисен пенсине ӳстермелли саккун проектне ярса парасси ҫинчен каланӑ. Патшалӑх пуҫлӑхӗ ҫак документа оперативлӑ майпа хатӗрленӗшӗн министра тав тунӑ.

**ИТАР-ТАСС.**

## КĔТĔВЕ ҪĔНЕТЕССИ - ТĔП ТĔЛЛЕВ

Унта пулсан тӗлӗнмеллипех тӗлӗнтӗмӗр. Ҫак туйӑма район ертӳҫи А.П.Князев та пытармарӗ, «Хуҫалӑхсенче кун пек таса ӗнесем ҫук»,- терӗ вӑл «Сад» фирмӑн Атайкассинчи сӗт-ҫу фермине мартӑн 11-мӗшӗнче ҫитсе курнӑ хыҫҫӑн.

Хуҫалӑхра ун чух ахаль ӗҫ кунӗччӗ. Вылӑх айне пӑчкӑ кӗрпи сарса панӑ. Кашни кунах ҫапла-мӗн. «Вӑл урай ҫӗрессинчен те питӗ лайӑх»,- тет ферма заведующийӗ Р.П.Михайлова. Хальхи вӑхӑтра фермӑра пӗтӗмпе 151 пуҫ ӗне-вылӑх, ҫав шутран сумаллисем - 50 пуҫ. Хура-шурӑ ула ӗнесем. Кашни ӗнерен сӗт илессипе паян Атайкассисене ҫитекеннни районта ҫук: сӑвӑм 14,9 килограма ларать. Чи нумай антараканни виҫҫӗ пӑрулана «Снежок». Талӑкеререн вӑл 28 килограмм сӗт парать. Ӑна апат та уйрӑм рационпа тивӗҫет.

Юн кун фермӑна Муркаш районӗнчи «Ударник» предприятирен чуптарнӑ 16-18 уйӑхри 27 пуҫ пушмак пӑру илсе килнӗ. Пурте ӑратлисем. Вӗсене туянма 528 пин тенкӗ тухса кайнӑ, анчах ун пеккине илнишӗн республика бюджетӗнчен субсидиленине пула 280 пинӗ каялла тавӑрмалла. Сумалли ӗнесен шутне ҫулталӑк вӗҫне 100 пуҫа ҫитересшӗн. Начар вылӑха малтанах пӑрахӑҫлама пуҫланӑ.

Ӗне сӗчӗ чӗлхи ҫинче тенине те тӗпе хураҫҫӗ. Рационта кашни кунах - утӑ (типӗтнӗ вӑхӑтра вӑл ҫумӑр курман та пулас - питӗ хитре), силос, вылӑх кӑшманӗ, йӗтре, концентрат, хушма апат та параҫҫӗ. «Фермӑра ӗҫлекенсем ҫуккипе хальлӗхе аптӑраман-ха»,- пӗлтереҫҫӗ «Садра». Доярккӑсен ӗҫ укҫи уйӑхсерен 3-4 пине ларать.

Фирма директорӗ Г.Н. Фомин акана элитӑллӑ



Фото ӳкерчӗкӗ авторӑн.

вӑрлӑхпа ҫеҫ ирттерме шутланине пӗлтерет. Ӗмӗтленме пулать те-ха теме ан васкӑр. Тухӑҫ никӗсне паха вӑрлӑхпа ҫӗнетессине хуҫалӑх пуҫланӑ, «Приокская» ҫурхи тулӑ 16 тонна туяннӑ. Вӑл - суперэлита. «Пирамида» ҫурхи тулӑ аталантармалли питомниклӑ, ӑна 3 тонна кӳрсе килнӗ. Кунсӑр пуҫне «Приокская» тепӗр 14 тонна илесшӗн. «Патшалӑх паракан ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курмалла»,- шухӑшне пытармасть ертӳҫӗ. Чӑн та, элиталлӑ вӑрлӑхпа тата ӑратлӑ вылӑхпа ӗҫлесен тӑкакӑн пӗр пайӗ тавӑрӑнать те - мӗншӗн усӑ курас мар?

**В.ИВАНОВА.**

❋ **Район ертӳҫипе А.П.Князевпа (сылтӑмри) хуҫалӑх ертӳҫи Г.Н. Фомин фермӑра.**

## ТИРПЕЙЛЕКЕН ПРЕДПРИЯТИСЕМ УРЛĂ ТА ИЛМЕ ПУЛАТЬ

Ҫурхи ака-суха ӗҫӗсене ирттерме республикипе 16,8 пин тонна дизель топливи, 6 пин тонна бензин, 800 тонна дизель ҫӑвӗ кирлӗ тесе пӗлтерет ЧР Ял хуҫалӑх министерстви. Ҫак уйӑхӑн 9-мӗшӗ тӗлне хуҫалӑхсенче топливо кирлин 26 проценчӗ чухлӗ пулнӑ. Ҫӗмӗрле, Красноармейски, Канаш, Ҫӗрпӳ районӗсем вӑл вӑхӑта 40-45 процент чухлӗ хатӗрлесе хума пултарнӑ. Вӑрнарсемпе Шӑмӑршӑсем каярах та ӗлкӗрме шанаҫҫӗ курӑнать: вӗсен саппас 7-шер процент ҫеҫ-мӗн.

Ҫунтармалли-сӗрмелли материал ыйтӑвӗн ҫивӗчлӗхне шута илсе асӑннӑ министерство «Чӑвашнефтепродукт» акционерсен обществипе пӗлтӗрхи декабрь уйӑхӗнчех килӗшӳ тунӑччӗ. Унта ҫуллахи дизель топливине ял хуҫалӑх предприятийӗсене ҫӑмӑллӑхлӑ хакпа парасси пирки палӑртнӑ. Пӗр тонна топливо хакӗ - 8,1 пин тенкӗ е литрӗ - 6 тенкӗ те 90 пус. Ҫунтармалли-сӗрмелли материала илме алӑра «чӗрӗ» укҫа ҫуккисем тирпейлекен предприятисем урлӑ та туянма пултараҫҫӗ. Кайран мӗнле татӑласси паллӑ: хайсен чӗр таварне вӗсене памалла.

**В.ЭВЕРККИ.**

## УНЧЧЕНХИ ХАКПА

**«Тӑван Ен» хаҫата почтальонкӑсем унччено хакпа ҫырӑнтараҫҫӗ. Ку ӗҫ мартӑн 31-мӗшӗччен пырать. Ун хыҫҫӑн хаксем хӑпараҫҫӗ.**

**Райхаҫат редакцийӗ.**

# ТĂВАН ТАВРАЛĂХ

## ÇУТ ÇАНТАЛĂКА СЫХЛАССИ - КАШНИН ТИВĔÇĔ

Тăван тавралăха сыхлас, унăн илемне упраса хăварас тĕллевпе районта самай ĕç туса ирттереççĕ. Иртнĕ çул çак тĕллевпе тĕрлĕ шайри бюджетран 12,5 миллион тенкĕ ытла тăкакланă. Чи пысăк ĕçсенчен Толик Хураски ялĕнче пурăнакансен сехрине хăпартса ишĕлсе пыракан çырмана «çăварлăхланине» палăртмалла. Ăна валли 3 миллион тенкĕ ытла пĕтернĕ. Калăплă тепĕр обьект та çав тăрăхалла. Вăл та ял çыннисен шăпипе çыхăннă. Толик Хураскисене çĕр йăтăнса пыни хăратнă пулсан, Юртукассинче пурăнакансене Çавал юхан шывĕ «хĕсме» пуçланă. Шыв çулне тӳрлетессине 2002 çулта пуçăннă. Пĕлтĕр строительствăпа монтаж ĕçĕсене 6,5 миллион тенкĕ ытлалăх пурнăçланă. Малтанхи обьектра «Водстрой» куçса çӳрекен механизацилеНĕ колоннăпа «Дорисс» АУОн 4-мĕш строительство организацийĕ тимленĕ, шыв çулне тӳрлетессипе подрядчик «Гэсстрой» АУО шутланать.

Шыв ресурсĕсене вараланасран сыхласси кашни çыннăн тивĕçĕ пулмалла. Тасатмалли сооруженисен тăрăмĕ те чылай витĕм кӳрет. Вĕсене çĕнетме район хыснинчен тата предприятисем хăйсем те укçа уйăрнă. Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕн, Кӳкеçри 27-мĕш професси училищин балансĕ çинчи, çавăн пекех Тутаркассинчи сооруженисене юсанă. Искуствăлла шыв хранилищисене те пăхса тăма тăрăшнă. Кочак Тăрăнти, Курак Чурачăкри, Йăршу юхан шывĕ çинчи пĕвесене çĕнетнĕ, Мамка ялĕ патĕнчине те манман.

Экологи хăрушсăрлăхĕн районти управленийĕ предприятисене тухса тĕтĕшах тĕрĕслев ирттерет. Асфальтпа бетон завочĕн, автозаправкăсен, тасатмалли сооруженисен, канализаци коллекторĕсен, çĕр çийĕннине хирĕç туса лартнă плотинасен тăрăмне уйрăмах вăйлă асăрхаса тăраççĕ. Çитменлĕхсемшĕн 46 предписани панă.


В.Иванова фото ӳкерчĕкĕ.

Тăван тавралăх илемĕ пирĕнтен кашнинчен килнине шута илсен, çамрăк ăрупа ăнлантару тата воспитани ĕçне çителĕклĕ тума тăрăшмалла. Яшкĕрĕмпе паянхи ача-пăча аллинче - ыранхи кун. Кирлĕ пĕлĕве сарассине ача садĕнченех пуçламалла. Экологи хăрушсăрлăхĕн управленийĕ те çак ĕçе хăйĕн тӳпине хывма тăрăшать, тĕрлĕ мероприятие йĕркелеме пулăшать, вăл е ку пуçару валли укçа-тенкĕ уйăрать.

**В.ТИТОВА.**
**Кураксем çитрĕç.**

## ПĔРРЕМĔШ КУРАКСЕМ - МАРТĂН УЛТТĂМĔШĔНЧЕ

Пирĕн тăрăха кураксем кăçал мартăн 6-мĕшĕнче вĕçсе килнĕ. Çапла хыпарлать РФ Çут çанталăк ресурсĕсен министерствин республикăри управленийĕ. Ытти çул вĕсем мартăн 16-мĕшĕ тĕлнелле килнине шута илсен çакă кураксем кăçал вунă кун маларах çитнине пĕлтерет.

Çунатлă туссем тăван ене васканине «Присурский» заповедник ученăйĕсем çанталăк ир ăшăтнипе тата хĕл те кăра пулманнипе сăлтавлаççĕ.

## ВĂРМАН ПУРНĂÇĔ - ПИРĔН ПУРНĂÇ

Вăрман халĕ çара. Шĕшкĕлĕхре чупса иртекен пăшие 200-300 метртан та курма пулать. Пакша çав-çавах йывăç çинче сиккелесе çӳрет-ха, хăйне валли йĕкел пухать. Шăлан çырлине те юратсах çиет вăл: çӳллĕ йывăç çинчен тĕм патне чупа-чупа анать.

Вăрман çуркунне хаваслă, çулла сулхăн, кĕркунне пуян, хĕлле ăшă теççĕ.

Вăрман кăткăс та нумай тĕрлĕ чĕрĕ организмсенчен тăрать, çакăн пек кăткăсскер кĕске вăхăт хушшинчех пулса каймасть. Çавăнпа пĕрлех вăрман касмасан та кĕске вăхăтрах пĕтме пултарать. Унта выльăх çӳретни, курăка çулни, тăкăннă çулçăпа ытти йышши çĕрĕке пуçтарса илни, çĕре таптаса пĕтерни тата ытти те вăрман пурнăçне нумай хавшатать. Вăрман начарланать, юлашкинчен хăйсен ĕмĕрне пурăнса иртterекен вată йывăçсен пуххи кăна пулса юлать. Çакăн пек вырăнтан тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем те тухса каяççĕ, таптаса хытарнă çĕр ăшĕнче пĕчĕк организмсем те пурăнма пăрахаççĕ.

Вăрманти ӳсен-тăрансен хушшинче тĕлĕнмелле кĕрешӳ пырать. Çĕр айăнчи тымарсем ӳсмелли вырăншăн кĕрешеççĕ, вĕсене те нумай тавралăх, тăранмалли апат кирлĕ. Çавăн пек кĕрешӳ пĕр самантлăха та чарăнмасть, вăл пĕр сас-чӳсĕр пулса пырать. Ăна тавралăха нумай вăхăт сăнакан çын кăна асăрхама пултарать.

Тискер кайăка илсен, вĕсем пĕр-пĕринпе тытăçса çапăçаççĕ е пĕр-пĕрин çине çав тери хытă кăшкăраççĕ, ун хыççăн уйрăлса каяççĕ. Тепĕр чухне çапăçакансенчен хăшĕ те пулин вилет. Вăйсăрри вăйлине вырăн хăварса парать. Çĕнсе илнĕ вырăна палăртас тесе тискер кайăк чикĕ тăршшĕпех хăйĕн шăршине хăварать. Имĕш, ыттисем, пĕлĕр: кунта кĕмешкĕн юрамасть.

Йывăçсем хушшинче вара вăйлисенчен хăтăлса юлма май çук. Пĕр гектар çинче ватă вăрманта 400-500 тĕреклĕ йывăç кăна тăрса юлать. Кашни йывăçах ӳснĕ чухне хăйне кирлĕ чухлĕ тавралăх ярса илет. Çав лаптăкра вăйсăрри пулсан, вăл ирĕксĕрех типсе хăрса ларать.

Вăрмансенче ӳсекен йывăç-курăк тăпраран тутлăхлă япаласемпе шыв илсе тăрать, унпа пĕрлех тымарĕсем урлă çавнашкал япаласем юхтарса кăларать. Вĕсемпе тепĕр йышши ӳсен-тăран усă курать.

Ӳсен-тăрансем кăларакан фитонцид тĕрлĕ йышши хурт-кăпшанкăпа микробсене пĕтерме пултарать. Çапла вара ӳсен-тăрансен те хăйсене сыхлама хăйне майлă химилле хĕç-пăшал пур.

Тискер кайăкпа вĕçен кайăксăр вăрман вăрман та мар. Ӳсен-тăрансемпе пĕрле вĕсем те вăрманти чĕрĕлĕх тĕнчи. Вăрман вĕсемшĕн пытанма, çура е чĕпĕ ӳстерме тата тăранса пурăнма тăван кил пулса тăрать. Анчах та çак ырлăха вĕсем ахаль кăна илсе тăмаççĕ, яланах пĕр канми ĕçлеççĕ, чĕрĕ организмсене пĕр шайра тăма майсем туса параççĕ.

Вăрманта пурнăç пĕр шайра тăни пĕтĕм чĕрĕ организм пĕр-пĕринпе тĕрĕс хутшăнса пурăннинчен килет. Анчах та çынсем ăна нумай улăштарма пултараççĕ. Усă тăвас тесе пăшисен шутне ӳстерсе пыни, калăпăр, çамрăк йывăçсене чылай пĕтерме май парать. Этем çут çанталăк пурнăçне хутшăнни тĕрлĕ йышши çыхăнусене улăштарса ярать.

Вăрмансенче сиенлĕ хурт-кăпшанкăсен шучĕ ӳссе кайни те тавралăхра кайăк-кĕшĕк сахалланса пынинчен килет. Хурт-кăпшанкă нумай ĕрчесе кайнă çулсенче йывăç çулçисем вăрманта пĕтсех юлаççĕ. Çавна пула йывăçсем начарланаççĕ, чирлеççĕ, хăраççĕ. Сăнаса пăхнă тăрăх, вăрманта пурăнакан кайăксем сиенлĕ хурт-кăпшанкă шутне 40-70 процент таран чакараççĕ.

Вăрманти пурнăç мĕн чухлĕ пуянрах та кăткăсрах, унти улшăнусем те пĕр майлă, майĕпен кăна пулса пыраççĕ.

Вăрманти пурнăç пĕр енлĕ улшăнса, начарланса ан кайтăр тесен, çынсем вăрманпа пĕлсе усă курмалла, каснă лаптăксем вырăнне çийĕнчех çĕнĕрен йывăç ытларах лартас пулать.

Сывă та пуян вăрман - çын пурнăçĕ. Вăрман çынна апат та парать, тăрантарать те, ăшăтать те, тумтир те парать, сиплет те.

Вăрмана кашниех сыхлас пулать, ăна пур енчен те пулăшмалла...

**В.МОСКОВКИН,**
**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ лесовочĕ.**

## ÇУРХИ ЕЙӲ ХĂРАТМАЛЛА МАР

**Çурхи шыв-шур епле каясси кашни çулах хумхантарать. Кăçал юр хулăнах маррине шута илсен хăрушлăх çук пек туйăнать. Çапах та мĕнлерех шухăшлать-ха çакăн пирки гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен районти штаб пуçлăхĕ В.М.Орлов?**

**«Хамăр туса иртtermеллисене тивĕçлипе пурнăçласан чрезвычайлă лару-тăру пулмалла мар,- терĕ Василий Михайлович. - Пирĕн районта 95 плотина, çавсенчен 20-ĕшне тума хам хăй вăхăтĕнче ĕçленĕ «Чебоксарскагропромхими» предприяти хутшăннă, вĕсенчен начартараххисем Анатри Макаçра тата Чурачăк енче. Пĕлтĕр вĕсене кăштах юсанăччĕ... Тепри - Янăш ял администрацийĕнчи Турикасси патĕнче. Вĕсем кăштах ишĕлме пултараççĕ. Ыттисем аптăрамалла мар.»**

**Ейӳ тапхăрĕ хур кăтартассинчен асăрханма, кирлĕ ĕçсене вăхăтра туса иртterме районта ятарлă комисси йĕркеленĕ. Унта тĕрлĕ служба представителĕсене кĕртнĕ, мероприяти планне çирĕплетнĕ. Вырăнти ял администрацийĕсенче хăйсен комисси пулмалла. Яланхиллех дежурство бригадисем йĕркелĕç, кашни пĕвепе шыв йышăнма яваплисене çирĕплетнĕ. Ейӳ комиссийĕн членĕсене ял тата поселок администрацийĕсем тăрăх çирĕплетсе тухнă.**

**Кирлĕ инструментсемпе оборудовани хатĕрри пирки интересленсен В.М.Орлов «Водстрой» ПМКн 5 самосвал, «Дорисс» АУОн пĕр экскаватор, «Чебоксарское» ДРСУн экскаваторпа бульдозер саппасра ларнине пĕлтерчĕ. Шăн çĕре касма ЭТУСăн «Бар» машина резервра-мĕн.**

**Юр кайма пуçласан комисси кашни икĕ кунта пĕрре пуçтарăнса калаçĕ, вырăнти лару-тăрăва тишкерĕ, мĕнле мера йышăнмаллине палăртĕ. Кирлĕ материалсенчен щебень, гравмасса пур.**

Конкурс

## ВĔСЕМ ТĂВАН ТАВРАЛĂХА ПĔЛЕÇÇĔ

«ASIO» экологи клубĕ йĕркеленипе тăван енĕн тавралăхне юратакансен районти конкурсĕ пулса иртнĕ. Унта 14 шкулти 42 ача хутшăннă. Çут çанталăкпа кăсăкланакансем хăйсене сĕннĕ виçĕ направленирен: «Ӳсен-тăрансем», «Çурăм шăммисĕр чĕр чунсем», «Çурăм шăммиллĕ чĕр чунсем» темăсенчен пĕрне суйласа илнĕ. Пултаруллисене ушкăнпа çеç мар, уйрăмшар та: грамотăсемпе тата парнесемпе хавхалантарнă. Çĕнтерӳçĕ шкулсене ачасем пухнă балл тăрăх палăртнă. Çĕньялти вăтам шкула çитекенни пулман. Тренккассисем - иккĕмĕш вырăнта, Атайкассисем - виççĕмĕш. Çатра Лапсарсемпе Çĕньял Покровскисем те хăйсем пултаруллине ĕнентерсе панă.

Ачасенчен Петр Михайлов (Çĕньял), Елена Воронцова (Тренккасси), Анна Молчанова (Çатра Лапсар), Олег Бабочкин (Тутаркасси), Ольга Егорова (Кӳкеçри 1-мĕш шкул), Наталия Маркелова (Ишлей) «Ӳсен-тăран» направленипе палăрнă. Çурăм шăммисĕр чĕр чунсем çинчен Руслан Никитин (Атайкасси), Олег Ефимов (Кăшавăш), Светлана Сергеева (Тренккасси), Татьяна Романова (Кӳкеçри шкул-интернат), Геннадий Гаврилов (Çĕньял) лайăхрах пĕлнĕ. Владимир Ильин (Çĕньял), Павел Радиков (Çĕньял Покровски), Александр Семенов (Атайкасси), Дмитрий Павлов (Çатра Лапсар), Роман Сергеев (Тренккасси) «Çурăм шăммиллĕ чĕр чунсем» номинацире пултарулăх кăтартнă.

## ÇУРКУННЕНЕ СЕНКЕР-КĂВАК СĂНПА ПĔЛЕТĔН...

Çуркунне хăш вăхăтра çывхарать? Татсах калаймастăн! Яланах, кунсерен питĕ кĕтетпĕр, тĕлĕнетпĕр: «Кĕтрĕмĕр, кĕтрĕмĕр, çывăрса юлнă, уй-хирсенче юр çук та». Аса илер-ха çут çанталăкăн кашни вăхăтне.

Пирĕн тавралăхра çуркунне умĕн каççерен сивĕтет, пит-куçа çемçе юр пĕрчисемпе перет. Хĕвел пĕлĕтре пĕр вăхăт çухалать те кайран каллех çуталса тухать, çил вăйланать. Йывăçсем, шурă кĕрĕк тăхăннăскерсем, чылайăшĕ пуçĕсене усаççĕ, чĕриклетеççĕ, хытă шавлаççĕ...

Сасартăк пĕтĕмпех улшăнать: пĕлĕтсем сенкер-чакăр сăнлă пулнăскерсем тĕттĕм сенкер сăнлă, çил-тăман вĕçтерет, анчах вĕсем çӳллĕ сăрт тăваймаççĕ - çырмасене тарса çухалаççĕ. Тавралăхра татах сăн улшăнать: çыран хĕррисем сирень тĕслĕ. Юхан шывсенче пăр шатăртатма тытăнать, пĕлес пулать - мĕн чухлĕ вăй кирлĕ пĕчĕк юхан шывсене сарлака та вăйлă юхан шыв пулма.

Ирсерен сивĕ-ха, пит-куçа чĕпĕтет. Çуркуннехи шăршă кĕрет пулин те кил хуçисем кăмакара хĕллехи евĕрех вутă çунтараççĕ.

Юртан хăтăлнă йывăçсем, кăнтăртан пирĕн тавралăха вĕçсе килнĕ кайăксем курăнаççĕ. Чи малтанхи хăнасем - кураксем. Вĕсем хăйсен пĕлтĕрхи, кăштах çĕмĕрĕлнĕ йăвисене тĕрĕслеççĕ, пĕр-пĕрне тĕрлĕ хыпар пĕлтереççĕ, тавлашаççĕ хăйсен хушшинче. Вĕсен кранклатни инçетренех илтĕнет.

Каярахпа шăнкăрчсем килеççĕ. Вĕсен çуркунне çитнине пĕлтерекен сассисенче - пăчкăпа вутă татнă евĕр сасă, кушак макăрнă сасă тата пуртăпа ĕçленĕ вăхăтра тухакан сасă.

Пуçланчĕ! Пĕлĕтре тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăк вĕçет. Вĕсем нимĕн те ăнланмаççĕ, кунĕпех вăрман уçланкинче туй тăваççĕ, вăрçаççĕ. Уй-хирте пĕчĕк юхан шывсем, шыв çийĕнче сенкер-кăвак сăнсем, тĕтреллĕ йывăр пĕлĕтсем. Уй-хирсенче симĕс «скатерть», калчасем йышлă шăтнă, сарса хунă симĕс тӳшек тейĕн. Хурăнсен çамрăк кăчкисем тухаççĕ. Вăхăт иртнĕ ĕнтĕ, кайăксем халĕ те пĕр-пĕринпе тавлашаççĕ, нумайăшĕ туй тунă, йăвисене ларнă, часах тавралăх шăпланать.

Çуркунне çывхарнă, хăй ĕçне тăвать.

Асăрхатăн: йĕри-тавра сенкер кăвак, апла - пирĕн тавралăхра çуркунне.

**В.МИХАЙЛОВ,**
**çут çанталăка юратакан.**

**Страницăна В.Иванова хатĕрленĕ.**

❊ Спорт

# КАВИР ÇИНЧИ ХĔРӲ ТЫТĂÇУСЕМ

Мартăн 14-мĕшĕнче, вырсарни кун, Апашри вăтам шкулта районти ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен йăлана кĕнĕ IV турнирĕ иртрĕ. Район администраци пуçлăхĕн парнисене çĕнсе илессишĕн йĕркеленĕ çак турнирта ку хутĕнче 1990-1992 çулсенче çуралнă хĕр ачасемпе арçын ачасем вăй виçрĕç. Икĕ кавир çинче пĕтĕмпе 150 ытла спортсмен кĕрешрĕ. Турнира Апашри, Тутаркассинчи, Кӳкеçри, Шупашкарти, Вăрмар, Вăрнар тата Йĕпреç районĕсенчи çамрăксем хутшăнчĕç.


Д.Жаворонкин фото ӳкерчĕкĕ.

Кĕрешӳ пуçланас умĕн район администрацийĕн пуçлăхĕ А.Князев ачасене спортра, вĕренӳре çитĕнӳсем тума, ялан çирĕп сывлăхлă пулма ырă сунчĕ.

Апашсем республика чемпионатĕнче те пĕр хут çеç мар çĕнтернĕ, призлă вырăн йышăннă.

Турнира хутшăнакансене ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федерацийĕн вице-президенчĕ, Чăваш Республикинчи кĕрешӳçĕсен пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ В.Семенов саламларĕ. Вăл Апашра иртекен турнирсене тăтăшах килсе çӳрет. Спорт ветеранĕ В.Смородинов, район администраци пуçлăхĕ А.Князев ячĕсемпе йĕркеленĕ турнирсем ялан ăнăçлă иртни çинчен каларĕ. Федераци ячĕпе В.Семенов район администраци пуçлăхне ятарлă призпа наградăларĕ, турнирăн тĕп судйине, Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченне В.Смородинова тав çырăвĕ парĕ.

Тĕп судья турнир уçăлни çинчен пĕлтерсен, кавирсем çине кĕрешӳçĕсем тухрĕç. Куракансем йышлă, вĕсенчен ытларахăшĕ - ачасен ашшĕсемпе амăшĕсем.

Хăйсен йывăрăш категорийĕсенче хĕрачасенчен Е.Леонтьева, Л.Арефьева, Э.Прокопьева, Т.Арефьева (Апаш), Г.Егорова (Тутаркасси), О.Абрамова (Шупашкар); арçын ачасенчен: В.Тунгулов, А.Арефьев, Р.Саржан (Апаш), И.Андреев (Тутаркасси), А.Картмасов, С.Абрамов, И.Филиппов, Н.Больцов, А.Галкин (Шупашкар), С.Филиппов (Кӳкеç) çĕнтерчĕç.

Ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен федерацийĕн призĕсене çаксем тивĕçрĕç: чи лайăх техникăшăн С.Абрамов (Шупашкар), чи çамрăк кĕрешӳçĕ В.Тунгулов (Апаш), çĕнтерӳ тума çирĕп кăмăллă пулнишĕн В.Константинов (Апаш).

Турнира хатĕрленсе ирттерме Шупашкарти «Гален», Тутаркассинчи «Меркурий» АУОсем, Ленин ячĕллĕ колхоз, Апаш ял администрацийĕпе шкул директорĕ пысăк пулăшу пачĕ.

**В.ГАВРИЛОВ.**

✿ **Кĕрешӳри çивĕч самант.**

❊ Пĕр шкултан килнĕ хыпарсем

## ЯНРАРĔ ÇЕПĔÇ ЮРĂ

Кăçалхи вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче Тренккасси шкулне музыкăпа вĕрентекен çĕнĕ учитель килчĕ. Ăна Владимир Петрович Алексеев тесе чĕнеççĕ. Çак эрнере шкула концертпа «Урхамах» ятлă ансамбль килесси çинчен пĕлтерчĕç. Эпир уроксем хыççăн концерт курма васкарăмăр. Ансамбльте пире музыкăпа вĕрентекен Владимир Петровича палларăмăр. Вĕсен унта арçынсен ансамблĕ иккен. Ытларах чăвашла юрăсем, вырăслисем те пур, хăйсем çырнă юрăсем янăрарĕç. Концерт сехете яхăн тăсăлчĕ. Эпир, шкул ачисем, кăмăллă юлтăмăр.

Владимир Петрович урок хыççăн кружок ертсе пырать. Ун патне хитре юрлама вĕренес текенсем çӳреççĕ. Кĕске вăхăтрах çамрăк вĕрентекен ачасемпе пĕр чĕлхе тупма пултарчĕ.

**А.ИЛЮШКИНА.**

## СЫВЛĂХЛĂ ПУЛАР!

Шкулта ку вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнчен кашни кунах пĕрремĕш урок хыççăн зарядка ирттересси йĕркелерĕç. Шăнкăрав янăрană хыççăнах кĕвĕ ярса параççĕ. Çав музыкăпа мĕнле хусканусем тумаллине ятарласа класран пĕр ача вĕренме çӳрерĕ. Хальвăл физкультура учителĕ пекех зарядка лайăх ирттерет. Вĕрентекенсем те пирĕнпе пĕрлех гимнастика тăваççĕ. Çапла майпа ачасем хăйсен сывлăхне çирĕплетеççĕ. Эпĕ хам та, ачасем те зарядкăна хаваспах, уçă кăмăлпа тăватпăр. Шкулта ирхине çакăн пек гимнастика тăвассине йĕркелени питĕ кирлĕ тата усăллă тесе шутлатăп. Районти ытти шкулсен те пирĕнтен тĕслĕх илмелле.

**М.ЯКОВЛЕВА.**

# *Тĕнче чемпионки Н.Ильина:*
# «ЙĔЛМЕ ЙĔЛТĔР ХĂВĂРТ ШУТĂР!»

Иртнĕ эрнере Салапайкассинчи пĕтĕмĕшле тĕп пĕлӳ паракан шкулта йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ пулчĕ. Унта 50 ача ытла хутшăнчĕ.

Ăмăрту пуçланас умĕн çак шкул воспитанницеи - спорт мастерĕ, кăçал йĕлтĕрпе чупса юниоркăсен эстафетинче тĕнче чемпионки ятне çĕнсе илнĕ Наташа Ильина ачасене ăшшăн саламларĕ: «Йĕлме йĕлтĕр хăвăрт шутăр, çирĕп сывлăхлă пулăр, физкультурăпа спорта яланах юратăр!»- терĕ вăл. Наташăна тĕнче шайĕнче çĕнтерӳ тума темиçе тренерпа учитель пулăшнă. Сăмахран, унăн пирвайхи вĕрентекенĕ Н.В.Васильева, Анат Кĕнер шкулĕнчи физкультура учителĕ В.П.Ильин тата ыттисем те. Тĕнче чемпионкипе иртнерĕ тĕл пулăва Н.В.Васильева та хутшăнчĕ, Наташа пĕчĕкренех спорта килĕштернине, пур предметпа та лайăх вĕреннине, умра тăракан тĕллев патне ялан хастар утнине палăртрĕ.

Акă, йĕлтĕрçĕсем старта тухрĕç, пĕрин хыççăн тепри малалла вирхĕнчĕç. Чи пĕчĕккисем - 1-4-мĕш классенче вĕренекенсем - пĕр километрлă дистанцире вăй виçрĕç. Çивĕч кĕрешӳре хĕр ачасем хушшинче Таня Васкеева (3 кл.) мала тухрĕ, ун хыççăнхисем Ирина Смирновапа (2кл.) Света Рязанова (4 кл.) пулчĕç. Арçын ачасенчен Артем Петров (3 кл.) çĕнтерчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Илья Фоминпа (2 кл.) Павел Кольцов (4 кл.) пайларĕç. Икĕ километра чупнă хĕрачасенчен 7-мĕш класри Надя Белякова чи матттурри пулчĕ. Олеся Моисеева (6 кл.) иккĕмĕш, Надя Исаева (8 кл.) виççĕмĕш вырăнта.

Улттăмĕш - тăххăрмĕш классенче вĕренекен арçын ачасем хушшинче Юрий Смирнов чи лайăх результат кăтартрĕ. Алексей Афанасьев (8 кл.) иккĕмĕш, Павел Кудряшов (9кл.) виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илчĕç.

Ăмăртура çĕнтерӳçисене грамота пачĕç, шкул чемпионĕсем Надя Белякова Юрий Смирнов алла çыхмалли сехет илме тивĕçрĕç.

Йĕлтĕрпе чупассине эпир çирĕп йăлана кĕртсе пыратпăр. Çак юн кун эстафета пулмалла, хĕр ачасемпе арçын ачасем уйрăмшар ушкăнсенче ăмăртĕç.

**А.ДИРЕКТОРОВ,**
**шкул директорĕ.**

## ВНИМАНИЮ ГРАЖДАН

В целях усиления контроля и координации работы с обращениями граждан распоряжением полномочного представителя Президента Российской Федерации в Приволжском федеральном округе С.В. Кириенко в районе создана общественная приемная.

По распоряжению Главного федерального инспектора по Чувашской Республике А.Д.Муратова от 5 марта 2004 года руководителем общественной приемной полномочного представителя Президента Российской Федерации в Приволжском федеральном округе по Чебоксарскому району назначен Пахомов Леонид Пантелеймонович на общественных началах директор - государственного учреждения «Чебоксарский районный центр занятости населения.

Прием граждан будет вестись ежемесячно по четвергам с 10 до 14 часов в здании муниципального предприятия «Силуэт», на втором этаже, в помещении территориальной избирательной комиссии.

## *НАЛУКÇĂСЕН ТУРНИРĔ*

Раççей Федерацийĕн налукçемпе сборсен министерствин Чăваш Республикинчи Управленийĕнче тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем йĕркелесех тăраççĕ. Акă, мартăн 13-мĕшĕнче «Чебоксаркагропромтехсервис» производство фирми» АУОн спорт залĕнче волейбол турнирĕ пулчĕ. Пирĕн 5-мĕш номерлĕ налук инспекцийĕнчи спортсменсем 2-мĕшпе 3-мĕш инспекцисен волейболисчĕсемпе тĕл пулса вĕсене çĕнтерме пултарчĕç.

Пирĕн командăна инспекци пуçлăхĕ А.Кузнецов капитан пулса ăста ертсе пычĕ, общестăлла тренер И.Прусаков кирлĕ сĕнӳсем парса тăчĕ. Пĕрешкел 2:0 шутпа çĕнтерсе, команда ăмăртăвăн финалне тухрĕ.

**И.ГОЛОВКО.**

## УЧИМСЯ ИГРАТЬ В ШАШКИ

*Задача №4*
*Белые: пп. с1; с7; д1;*
*Черные: пп. а3,с3;д5;*
*Белые начинают и через восемь ходов выигрывают.*
*За решение задачи 3 очка.*



*При решении задач можете использовать следующие сокращения*
*Б.- белые; Ч.- черные; Д.- дамка;*
*ДД- дамки; п.-простая; пп. - простые;*
*Х.- выигрыш; =.- ничья; ! - сильный ход;*
*? - слабый, проигрывающий ход;*
*а1 - в2 или коротко ав2 - запись хода*
*а1:с3 или коротко ас3 - бой шашки.*
Начало задач в номере от 3.03.04 г.

**Рубрику ведет**
**мастер спорта СССР М.ЕФИМОВ.**

## ХĔЛЛЕ

**Килсе кĕчĕ сивĕ хĕл,**
**Хура çĕр шуралчĕ,**
**Тусăм, часрах йĕлтĕр ил,**
**Кайса ярăнасчĕ.**

**Тăвайккинчен çунашка**
**Вĕççе анчĕ пĕччĕнех.**
**Çӳлте тăрать Марине**
**Ăллипе сулкалаçа.**

**Ирина ПОПОВА,**
**7 «б» класс.**

## КОНЬКИПЕ

**Тухрăм эпĕ урама,**
**Кайрăм эпĕ пăр çине.**
**Пăр çинче ача-пăча**
**Ярăнаççĕ конькипе.**

**Сергей ЯКОВЛЕВ,**
**6 «а» класс.**
**Иккĕшĕ те Атайкасси шкулĕнчен.**


*Создается КФХ «Вест» из земельной доли Вастеева Б.Р. площадью 1.47 га (пашни), расположенной около д.Варпоси в поле №7 рядом с ФХ Кудряшова В.Е. из долевых земель СХПК «Атăл». Претензии принимаются в письменном виде в течение месяца в отделе экономики и управления имуществом администрации Чебоксарского района.*

К СВЕДЕНИЮ НАСЕЛЕНИЯ И РУКОВОДИТЕЛЕЙ ОРГАНИЗАЦИЙ
**На склад Чебоксарского топсбыта поступили 23 вагона с каменным углем из Кузбасса для продажи населению и организациям. Каменный уголь хорошего качества, сортовой, крупный. Склад работает с 8 до 17 часов. Выходные дни суббота и воскресенье. Контактные телефоны: 20-17-95; 20-17-21.**

*Продается севок оптом и в розницу. Тел.: 2-35-58.*

*Продаю сено. Тел. в п. Кугеси 2-40-12.*

*Продаю пиломатериал любой и на заказ. Возможна доставка. Цена от 1350 р. Тел. раб. 8-240—22217, 8-903-389-14-00.*

*Требуется фармацевт. Оклад 2500 рублей. Телефон: 2-12-82, 2-17-55.*


❊ ❊ ❊

Коллектив МОУ «Янышская ООШ» выражает искренние соболезнования ветерану ВОВ Василию Владимировичу по поводу смерти супруги, ветерана труда **Агнии Ивановны ВИНОГРАДОВОЙ,** много лет проработавшей директором школы.

Управление образования администрации района и районная организация Профсоюза работников народного образования и науки выражают глубокие соболезнования Кутузовой Светлане Дмитриевне, учительнице физики МОУ «Синьяльская средняя общеобразовательная школа», в связи со скоропостижной кончиной ее **МУЖА.**

Управление образования администрации района и районная организация Профсоюза работников народного образования и науки с глубоким прискорбием сообщают о кончине **Василия Осиповича ОСИПОВА,** длительное время проработавшего учителем Хыркасинской семилетней школы, и выражают искренние соболезнования семье, родным и близким покойного.

Хыркасси ял администрацийĕ **Василий Осипович ОСИПОВ** пенсионер нумай вăхăт чирлесе выртнă хыççăн вăхăтсăр вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

Тренккасси шкул коллективĕ Хыркасси шкулĕнче нумай çул учитель ĕçленĕ **Василий Осипович ОСИПОВ** пенсионер вăхăтсăр вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


ТĂВАН ЕН
("КРАЙ РОДНОЙ")
Чебоксарская районная газета

Учредители:
ГУП "Кугесьский издательский дом"
Мининформполитики ЧР,
Министерство печати и информационной политики Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру А.А.ПЕТРОВА

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

( Гл. редактор - 2-12-61, ответственный секретарь, фотокорреспондент - 2-13-80, отдел сельского хозяйства - 2-21-88, культурный отдел - 2-12-59, отдел писем - 2-21-88, бухгалтерия - 2-12-66. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер набран, сверстан и отпечатан в ГУП "КуИД" Мининформполитики Чувашии. Тел./факс: (8240) 2-13-83. E-mail: print@chebs.cap.ru

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 16.03.2004 г. в 16 час. 00 мин.
Заказ № 705. Тираж 1765.
Индекс газеты - 54820.